# Демографи хӑрушлӑхӗ сирӗлмен-ха

(Вӗçӗ. Пуçл. 1-мӗш стр.).

ланулла: çулталӑка çитиччен хи тӑватӑ ачан та чӗрисем вӑхӑтсӑр тапма чарӑннӑ.

Тепӗр чухне загс пайӗнче вилни çинчен калакан хута ҫарасси тӑсӑласси пулать. Иртнӗ çул кунашкал 99 тӗслӗх пулнӑ. Регистрациленӗ 24 тӗслӗхӗнче вилекенӗн тӑванӗсем медицина свидетельствине каярах юлса илнӗ, çавна май вӗсен документчӗ те каярахри датӑпа çырӑннӑ.

*– Документсене улӑштаракансем нумаййӑн-и тата?*

– Юлашки вӑхӑтра загс акчӗсем çине улшӑнусем кӗртес текенсем, чӑн та, йышлӑ. Виçӗм çулхипе танлаштарсан (115) ыйтса çыракансем 38 ытларах пулнӑ. Пӗлтӗр пӗтӗмпе 153 заявлени пӑхса тухнӑ. Пурне те – вӑхӑтра. Пӗрремӗшле акт çыравӗсене улшӑнусемпе тӗрӗслӗх кӗртнӗ хыççӑн иккӗмӗш экземплярӗсене те улӑштарма загсӑн республикӑри архивне извещенисем янӑ. Документсенчи çӗнӗлӗхсем пирки çийӗнчех Раççей федераллӑ миграци службин Чӑваш енри управленийӗн Вӑрнар районӗнчи пайне, халӑха социаллӑ пулӑшу паракан районти органне (ашшӗлӗхне йышӑнни çинчен) пӗлтернӗ. Ашшӗлӗхне илнӗ хыççӑн хушамата, ята е ашшӗ ятне улӑштарни, мӑшӑрланни е уйрӑлни пирки даннӑйсене ик эрнерен иртмесӗр çар комиссариачӗсене пӗлтернӗ. Пӗр сӑмахпа, пӗтӗм отчета кирлӗ çӗре вӑхӑтра тата тӗрӗслесе тӑратнӑ.

*– Ытти кулленхи ӗçсем те нумай-тӑр загс ӗçченӗсен?*

– Пирӗн пур ӳсӗмри çынсемпе те ӗçлеме тивет. Пурне те ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнма, тухса тӑнӑ ларутӑрура пулӑшма тӑрӑшатпӑр. Çынсем хӑйсене кӑсӑклантаракан ыйтусен хуравне çавӑн пекех телефонпа е Интернет урлӑ пӗлме пултараççӗ. Иртнӗ çулта загс пайӗ 700 консультаци панӑ. Пӗтӗмпе вара 4939 заявленипе ыйтса çырнине пӑхса тухнӑ. Федераллӑ бюджета пӗтӗмпе 351 пин те 750 тенкӗ пошлина хывнӑ.

*– Загс пайӗ йӗркелекен мероприятисене те асӑнмалла пулӗ...*

– Шел пулин те, пӗлтӗр мероприятисем нумай ирттерме май килмерӗ. Çапах та Амӑшӗн кунӗ тӗлне хатӗрленӗ уяв касӗ асра юлмалла иртрӗ. Унта ылтӑн туй паллӑ тӑвакан Кӑмпалти Юлия Федоровнапа Григорий Павлович Павловсене тата Вӑрнарти Мария Дмитриевнапа Петр Иванович Павловсене чӗнтӗмӗр. Вӗсене çемьеллӗ пурнӑç юбилярӗсен Хисеп кӗнекине кӗртрӗмӗр.

Кӗмӗл тата ылтӑн туй уявӗсене Вӑрманкас, Калинино, Мӑн Явӑш тата Çӗрпел ял поселенийӗсенче те йӗркеленӗ.

2010 çулхи май уйӑхӗн 9-мӗшӗнче, çавӑн пекех 100-мӗш номерпе апрелӗн 12-мӗшӗнче çуралнӑ ачасен ашшӗ-амӑшне чаплӑ ларутӑрура свидетельствӑсем патӑмӑр.

Кӑçалхи çул та халӑх ыйтӑвӗсене вӑхӑтра татассипе тимлесе ӗçлесшӗн. Анчах хальлӗхе, шел те, ытларах хурлӑхлӑ хутсем хатӗрлеме тивет. Пӗр уйӑхра акӑ 23 пепке кун çути курнӑ. Вилекенсем вара виçӗ хут ытларах – пурӗ 70.

– Калаçушӑн тав.

**С.ЧИКМЯКОВА калаçнӑ.**



# Коммуналлӑ тӳлевшӗн – парне

Иртнӗ çул вӗçӗнче Раççей Почти коммуналлӑ тивӗçтерӳсемшӗн тӳлекенсем хушшинче акци ирттерчӗ, анкетӑсем тӑрӑх парнесем вылятрчӗ.

Акцие Вӑрнар тата Йӗпреç почтамчӗсем тата поселокри 4-мӗш çыхӑну уйрӑмӗ хутшӑнчӗç. Ун вӑхӑтӗнче коммуналлӑ тивӗçтерӳсемшӗн хывнӑ 11 пин те 726 çынран 849-шӗ анкетӑсем çырнӑ. Иккӗн çӗнтерӳçӗсем пулса тӑнӑ. Вӗсем Алексей Терентьев (автомобиль валли пылесос выляса илнӗ) тата Валерий Карпов (DVD-плеер тухнӑ).

*Сӑн ӳкерчӗкре: телейлӗ çынсенчен пӗрне – А.Терентьева – Вӑрнар почтамт пуçлӑхӗн коммерци енӗпе ӗçлекен заместителӗ Нина Захарова тата Вӑрнарти çыхӑну уйрӑмӗн пуçлӑхӗ Валентина Карпова вылявпа саламларӗç.*

**Хамӑр инф.**

# Ӑсансем таврӑнаççӗ...

## ЭПИР ПУРӐНАКАН ТАВРАЛӐХ

– Ӗненес те килмест: çак вӑрмана нивушлӗ пӗр çын лартса ӳстернӗ?

Автобуса Шупашкар вокзалӗнчех ларнӑ çак пассажир тем тӗрлӗ ыйтупа та интересленет. Ялне кӗнӗ-кӗмен Кӳлхӗрри кӳлли пирки сӑмах тапратрӗ. Халь мар, çулла пур пӗр çитсе куратӑп тет. Сылтӑмра Мӑньял Хапӑс мӗлки курӑнса кайрӗ, ман кӗç-вӗç анмалла. Киле çитрӗм!

– Хыр та чӑрӑш. Епле капӑр: ката, вӑрман. Миçе пин кӑк чӗрӗлсе хӑпарнӑ!

– Эп вӗсене пӗчченех лартса ӳстернӗ, – тӗлӗнтертӗм çулти юлташӑма.

Вичкӗн куçӗпе вӑл ман çине тӑрӑхланӑн пӑхкаласа илчӗ:

– Çук, вӑрман улпучӗ мар эс, ытлашши интеллигентлӑ. Хӑть сухална та ӳстермен. Аллусем, чӑнах та ӗнтӗ, тимӗр авмаллискерсем.

Çулташӑм вӑрман тенӗ çӗре кӗçех кӗрсе çухалаттӑм, çавӑн сасси янӑраса кайрӗ: «Маттур эсӗ, саламлатӑп!» Аллине çӗкленӗ те пуç пӳрнине çӳлелле кӑнтарнӑ. Автобус тапраниччченех алӑкра тӑчӗ. Ку мана автобус чарӑннӑ вырӑнтан киле хӑйне май ӑсатнӑ тепӗр çын пулчӗ. Унччченхи пӗр-иккӗшӗ çинчен кӑштах калӑп-ха.

Авланнӑ хыççӑн арçын е арӑмӗн саппунӗ айне пулать, е хӗвне кӗрсе ӳкет. Ӑна туса пар, куна куçарса ларт, вутӑ çурмалла, мунча хутмалла – тата тем те пӗр. Арӑм хушнипех пӗр ирхине илӗм-тилӗмпе вӑрӑмрах çула тухрӑм. Ӗнер лапка ӑшӑ юр çунӑччӗ. Ирхи сивӗ сӑмсана чӗпӗтни сисӗнет. Пӑхатӑп та, çӗре юр айӗн каюра кӑпкалатса купаланӑ евӗр тӗмескесене асӑрхатӑп. «Нивушлӗ?..». Çурçӗрте юр кулисен айӗнче кукӑр хӳресем çӗр каçатчӗç. Ӑслайлӑ сунарçӑсем вӗсене сисӗнкӗсӗр лап! ӳксе пусса выртса тытатчӗç. Хам та хӑтланса пӑхнӑ. Пӗри врр! вӗççе тухрӗ те, сӑмсаран тапса хӑварчӗ. Сӑмсаран юн пӗрӗхет. Кӳренӳллӗн, хаяррӑн тепӗр купана пусса выртрӑм. Ку манран та хаяртарах пулчӗ, çамкаран çапса хӑварчӗ. Эрне ытла кӑвак пит-куçпа çӳрерӗм. Сана улталанисем, çитменнине, катана вӗççе тармаççӗ, çывӑхри йывӑç çине лараççӗ те, сана «тӑмсай эс!», тенӗн, чалӑшшӑн пӑхаççӗ.

Утатӑп ирхи уçӑ сывлӑшпа кӑкӑра халтӑрлатса. Кӑмӑла киленӗç туйӑмӗ ачашлать. Ман пурнӑç, ман кил-çурт таврашне çӗнӗлӗх килни сисӗнет. Телей мар-и: ман вӑрмана ӑсансем иленесшӗн! Тахçан вӗсем Салука вӑрманӗнче пайтах курӑнкаланӑ. Халь, ак, ман çывӑха та çитрӗç. Çук, юр тӗмескине урапа та тӗкӗнместӗп. Хӑратмастӑп. Çывӑрччӑр. Татах килччӗр.

Арçыннӑн хӑйӗн ӗмӗрӗнче сӑваплӑ та пысӑк виçӗ ӗç пурнӑçламалла, тенӗ. Ку саккуна кашни арçын пӗлме тивӗç. 1956 çултанпа тӗнче касса эп пайтах çӳренӗ. Хамӑн пирвайхи тивӗççене нихӑçан та манман. Çут çанталӑка килӗштернӗ, кӑмӑл кӗввине-çеммине унпа çурасуллӑн ӗнерленӗ. Унсӑрӑн май çук. Унсӑрӑн лартнӑ йывӑç та ӳсмест, выльӑх-чӗрлӗх те ӗрчемест.

Эп кил-çурт çавӑрас вырӑнтан унччен чаплӑ-сумлӑ çынсем ютшӑннӑ пулнӑ. Тен, уйри çӗр тесе тиркенӗ. Тӳпемлӗ вырӑн. Тавралӑх анлӑн курӑнать. Ахӑртнех, чӑваш çӗршывӗнчи çӳллӗрех вырӑнсенчен пӗри пуль. Балти тинӗсӗн шайӗнчен 168 метр çӳллӗрех. Каластӑк, Хапӑс чиркӗвне çакӑнта лартмалла пулнӑ...

Хапӑссем ку çӗре Вышка уйӗ теççӗ. Колхозсемпе совхозсем йӗркелесе çитернӗ тӗле кунта геологсемпе геодезистсем килсе çитнӗ. 50 метр çӳллӗш вышка хӑпартса лартнӑ. Ачалла, йӑтӑнса аниччен, вышка тӑрне хамӑр та улӑхнӑ. Атӑл юхан шывне курас килетчӗ...

Хама çӗр уйӑрса панӑ хыççӑн пуринчен те малтан йывӑççем лартма тытӑнтӑм. Тӑхӑр вуннӑмӗш çулсем пыратчӗç-ха. Халь вӑл тапхӑра «смута» тесе хакларӗç. Çухатнӑ çулсем имӗш... Çухатнӑ йӑх-ӑрусем... Чӑнах та ӗнтӗ, халӑх, уйрӑмах çамрӑк йыш, ӗçе пӑрахрӗ, ӗçке ярӑнчӗ, «крутойраххисем» самопал суттипе тытӑнкаласа пычӗç. Влаç тӳлӗк прихватизацишӗн антӑхать. Номенклатура бизнес авӑрне чӑмнӑ: пурте харпӑр хӑй фончӗпе фирмине чӑмӑртасшӑн. Пурлӑхшӑн тӑванӗ тӑванне кӑнтса хурать. Çук, капла юрамасть, терӗм. Мана совет самани пӑхса ӳстернӗ. Мана ӗçе вӗрентнӗ. Хамӑн пурнӑçа манӑн хамӑн – хамӑн алӑпа тумалла!

Пӗлетӗр: ВАСХНИЛ академикӗ Н.Вавилов тӗрлӗ ӳсен-тӑрансен вӑрлӑхне мӗнпур континентран пуçтарнӑ. Сӑнав ӗçӗсене Саратов облаçӗнчи Ершов хулинчи Вӑтам Атӑлпа Анат Атӑл ял хуçалӑх сӑнав институтӗнче ирттернӗ. Эп çав вырӑнсенче пулнӑ. Тӗлӗнеттӗм. Агронома вӗреннӗ хыççӑн хамӑн та сӑнавсемпе аппаланас килетчӗ. Ак ӗнтӗ, хӑть йывӑççемпе ӗçлесе кӑмӑла кантарам. Эп хамӑр тӑрӑхри мӗн пур тӗрлӗ йывӑça ӳстерсе пӑхасшӑн: лартатӑп та лартатӑп. Çӗпӗр кедрне вӑрӑран çитӗнтеретӗп. Пирвайхисем вун пиллӗкре ӗнтӗ – пӗве çитнӗ йӗкӗтсем пек лараççӗ. Балкан каштанӗн вӑрлӑхӗ ӑнӑçлӑ шӑтрӗ. Каштансем йӗркеллех ӳсеççӗ. Япони айви. Кавказ винограчӗ. Аргентина груши. Америка чийи. Монголипе Европа юманӗсем. Греци мӑйӑрӗ пуласса кӗтетӗп... Пурне те савса, юратса пӑхатӑп. Анкарти тавралла хырпа чӑрӑш хӑпарчӗ. Пахчана тухсанах сӑмсана тутлӑ шӑршӑ çапать. Ман вӑрманта шухӑ çил лӑпланать. Алхасса кайнӑ çил-тӑман чарӑнать, шоссе хӗррине вирхӗнсе тухаймасть, çула кӗртпе хуплаймасть. Хальччен выльӑх-чӗрлӗх, машина-трактор хытарнӑ çӗр çинче çуркуннерен тытӑнса тӗрлӗ кӑмпа тапса тухать: шур кӑмпа, шур кӑрӑç, майра купарчи... Вӗсене Анаткас Хапӑсри ватӑсем тӗллӗн кӑмӑлласçӗ. Ӑсансем хыççӑн эп ӳстернӗ йывӑççене вӗтӗ вӗçен кайӑксем юратса пӑрахрӗç. Шӑпчӑксем чарӑна пӗлми юрлани мана чӑрмантармасть. Хир чӑххисем ларса-канса çӗр каçса кайнӑшӑн савӑнатӑп кӑна. Кунта хӳтлӗх тупнӑ чӗрӗпсемпе куянсене хӑваламастӑп. Пӗррехинче кӗвенте пек çӗлен шунине куртӑм. Çӗлене им-çам сапнӑ çӗрте тӗл пулаймастӑн. Шапа та, каюра та таса тӑпрана хапӑллать. Кусем валли апачӗ те çукрах пек, пур пӗр пурӑнаççӗ.

Çурт-хуралтӑпа эпӗ хам пӗччен тенӗ пек аппаланнӑ. Пура хам каснӑ. Хамах – каменщик, кӑмакаçӑ, платник, столяр, электросварщик. Ӗçрен ан хӑра – вӑл хӑй санран хӑратӑр.

Малтан, типӗ çулхине, çум курӑкӗсӗр пуçне нимӗн те ӳсмерӗ. Эп пӗтӗм лаптӑка, 80 соткӑна, тимӗр кӗреçепе чавса çаврӑрса хунӑ. Карта тытрӑм. 1999-мӗшӗнче мӗнпурӗ ӑнса çитӗнчӗ – пасара тухса сутмалӑх йӑтӑнчӗ. Курӑк – мӑй таран. Выльӑх-чӗрлӗх – пӑхма ан ӳркен: ӗне, сысна, сурӑх, чӑх-чӗп... Хама пулӑшакансене ыррӑн тав тӑвас килет. Малтан Кӳлхӗрринчи йысна Александр Павлов (Палля) алӑ тӑсрӗ, хӑйне уйӑрса панӑ делянка вӑрмана мана парнелерӗ. Районти экологи пайӗн пуçлӑхӗ Петр Павлов машина-трактор тупса пачӗ. «Колос» совхозри 2-мӗш уйрӑм ертӳçи Владимир Верендеев укçа-тенкӗ нушине çӑмӑллатрӗ. Йӗпреç вӑрманпромхозӗн директорӗ Геннадий Урмаков маншӑн пӗр вакун йывӑç шеллемерӗ.

Эп ачаран ӑнланнӑ: ӗçе кӳлӗнтӗн пулсан, кӑмӑлпа сӳрӗкленме, алӑ усма юрамасть. Йӗркеллӗ çын эс ырӑ тӗллев тытнине ӑнланатех. Вӑрӑпа пурнӑç тӑваймастӑн. Иртнӗ чӗрӗк ӗмӗрте унччченхиллех çанӑ тавӑса ӗçлестӗк, пирӗн çӗршыва пӗтӗм тӗнче ӑмсанса тӑмалла.

Паçӑрхи пассажир (çӳлте каланӑччӗ) ман пата кӗреймерӗ. Çывӑхри шоссепе кунӗн-çӗрӗн автомашина чупать. Кӗрсе тухакан хӑнасем те тупӑнаççӗ. Волгоград облаçӗнчи Иловля хулинчи улшуç çитсе чарӑнчӗ. Иномарка та шыв ӗçесшӗн. «Ай, шывӗ тутлӑ-çке!» – тет хуçа. Пӗр витре таса шывшӑн пин тенкӗ хӑварма хатӗр. «Чӑваш шывшӑн укçа илмест», – тетӗп. «Сут çакна мӗн пурне, Мускавра хваттер туянса паратӑп!» – авӑрланать улшуç. Хака икӗ хут ӳстерме сӗнет. Таврӑннӑ чух пур пӗрех кӗрсе тухатӑп, текелет. Çак шухӑшпах Азербайджан бизнесменӗ тапӑнчӗ. Ку та Мускавпа илӗртесшӗн. Хула варринче пы-ы-сӑк хваттер парнелеме шантарать. Çӳлти хутран Кремль, Мускав юхан шывӗ курӑнать...

– Килӗме ӑсансем иленчӗç-ха, – терӗм кулкаласа. Ман шӳте Азербайджанӑн качча кайма хатӗрленнӗ чипер пики кӑна тавçӑрса илчӗ курӑнать: «Телейлӗ пурнӑр!» – тесе хӑварчӗ.

Мускав – инçе. Кремль – çӳлте. Маншӑн тӑван çӗр çинчех пурнӑç тулӑх. Ӑсансене юрататӑп. Упа-кашкӑртан сыхланасси хамӑртан килет.

**Вл.СКВОРЦОВ,**
Мӑньял Хапӑс.

СПОРТ

# Тӗрлӗ ӑмӑртусенче

**ВОЛЕЙБОЛ.** Иртнӗ шӑмат кун Вӑрнарти физкультурӑпа спорт комплексӗнче, Вӑрнарти 1-мӗш вӑтам шкулӑн тата 29-мӗш професси училищин спортзалӗсенче республикӑри шкул ачисен волейбол лигин вӑййисем иртнӗ. Ку хутӗнче хӗрсем тупӑшнӑ. Унта Мӑн Явӑшри, Калининӑри, Çӗрпелти, Вӑрнарти 1-мӗш тата 2-мӗш, Кӳстӳмӗрти, Санарпуçӗнчи, Ярмушкари, Кульцаври, Аçӑмçырминчи, Хапӑсри тата Вӑрман Кипекри шкул командисем хутшӑннӑ.

Çӗрпел шкул команди пӗр тӗл пулура та выляса яман. Кунта вӗренекен хӗрсем ярмушкасене, поселокри икӗ шкул командине те, калининӑсене те 2:0 шутпа парӑнтарнӑ. Çапла вӑл 2010–2011 çулхи иккӗмӗш тапхӑрӑн çӗнтерӳçи пулса тӑнӑ.

Калининӑсем иккӗмӗш вырӑнта. Вӑрнарти 2-мӗш вӑтам шкул хӗрӗсем – бронза призерсем.

**ЙӖЛТӖР.** Канмалли кунсенче Юрий Александрович Тикинев тренер патӗнче ӑсталӑха туптакан çамрӑк йӗлтӗрçӗсем республикӑри чупӑва хутшӑннӑ. Пӗрремӗш кунхине Александр Романов 6-мӗш, иккӗмӗш кунне 2-мӗш вырӑнсене йышӑннӑ. Ирина Тикиневан 8-мӗш тата 7-мӗш, Екатерина Лукинан 12-мӗш тата 7-мӗш кӑтартусем.

**ЙЫВӐР АТЛЕТИКА.** Ку енӗпе Етӗрне хулинче иртнӗ республика первенствине районти 16 атлет хутшӑннӑ. Юрий Павлович Агиловӑн вӗренекенӗсем Артем Максимов кӗмӗл, Леонид Дмитриев бронза медальсене тивӗçнӗ.

**ИРӖКЛӖ МАЙПА КӖРЕШЕССИ.** Канмалли кунсем кӗрешӳçӗсен те ӑмӑртура иртнӗ. СССР спорт мастерӗн О.Маркиянован парнисене çӗнсе илессишӗн пынӑ республика турнирӗнчен вӑрнарсем виççӗн кӗмӗл медальсемпе таврӑннӑ, вӗсем – Пӑртасри Анжелика Кондратьева тата Люда Семенова, Кӗçӗн Кипекри Настя Иванова.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

**РАЙОН ПРОКУРАТУРИНЧЕН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ**

# Информацие пытарнăшăн

**Вăрнар район прокуратури тĕрĕслев вăхăтĕнче палăртнă тăрăх, Чăваш Республикин Арбитраж сучĕн 2009 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе «Вурнарыагрострой» обществăра панкрута кăларас ĕç пырать – кунта вăхăтлăх управляющие палăртнă.**

Асăрхав тапхăрĕнче обществăн 1 миллион тенкĕ ытла парăм пулнă, çав шутра ĕç укçи тĕлĕшпе – 463796 тенкĕ. 2009 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕнче «Вурнарыагрострой» ĕçченĕсене «Строительно-производственная фирма «Вурнарыагрострой» обществăна куçарса кунтан ĕçрен хăтарнă. Ун чухнехи ертӳçĕ ăнлантарнă тăрăх, тӳлесе татман ĕç укçине те официаллă мар майпа çĕнĕ обществăна куçарнă, кайран ăна ĕçлекенсене шутласа панă.

Ĕç тӳлевĕн парăмне предприяти ертӳçи арбитраж управляющийĕнчен пытарнă. Бюджета хывмалли обязательнăй тӳлевсемпе татах та парăма кĕрсе каяс мар тесе, «Вурнарыагрострой» обществăра тимлекенсене виçĕмçулхи октябрь, ноябрь, декабрь уйăхĕсенче ĕç укçи тӳлемен. Вăрнар район прокуратури «Вурнарыагрострой» обществăн унччензи ертӳçи тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарнă. Вăрнар районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин йышăнăвĕпе ăна административлă явап тыттарнă, 5 пин тенкĕ штраф тӳлеттернĕ.

**Л.СПИРИДОНОВА,**
**Вăрнар район прокурорĕн аслă помощникĕ**
**1-мĕш класлă юрист.**

**СУД ТЕНКЕЛĔ ÇИНЧЕ**

# Вăрра çийĕнчех тупнă

**Пĕлтĕрхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче районти тĕп больницăн ача-пăча консультацийĕн пӳлĕмĕнчен компьютер техникине вăрланăччĕ. Преступление тунă çынна милици сотрудникĕсем çийĕнчех шыраса тупрĕç. Вăл – Çĕнĕ Шупашкарта пурăнакан 25-ри çамрăк, пĕр вырăнта тĕппленсе вăй хуман, унта-кунта уйрăм предпринимательсем патĕнче ĕçлекеленĕ.**

Вăрнарти больницăра çаратнă кун Д.Васильев ӳсĕр пулнă. Ют пурлăха илсе тухас тĕллевпе çурçĕр тĕлĕнче пынăскер, картотека пӳлĕмне кантăк чӳречине çĕмĕрсе кĕнĕ. Кунтан вăл монитор, принтер, клавиатура вăрланă. Больницăна пĕтĕмĕшле 13128 тенкĕ те 87 пуслăх тăкак кӳнĕ.

Д.Васильев тĕлĕшпе РФ Уголовлă кодексĕн 158-мĕш статйин 2-мĕш пайĕн «б» пункчĕпе – ют пурлăха çаратнăшăн – уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна Вăрнар район сучĕ çулталăк вĕçĕнче пăхса тухнă, айăплав йышăнăвĕ кăларнă. Суд Д.Васильев пĕрремĕш хутчен уголовлă явап тытнине, ăна пурăнакан вырăнта лайăх хакланине, айăпне йышăннине тата преступление мĕнле тунине каласа парса следствие пулăшнине шута илнĕ. Çавăн пекех эксперт комиссийĕ унăн ăс-тăн тĕлĕшĕнчен улшăнусем пуррине палăртнă, çапах та çамрăк преступлени вăхăтĕнче саккуна пăснине аван ăнланнă.

Суд Д.Васильева 5 пин тенкĕ штраф тӳлеттерме йышăну кăларнă.

**Н.ВАСИЛЬЕВА,**
**шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕ çумĕнчи следстви уйрăмĕн следователĕ**
**юстици капитанĕ.**

# Амăшне хĕн кăтартнăшăн

**Анне – ачана кун çути парнелекенĕ, ăна пăхса ӳстерекенĕ, пурнăç тăршшĕпе пулăшса пыраканĕ. Енчен те ывăлĕ е хĕрĕ хăйĕн чи çывăх çыннине сивĕ сăмахпа хăртать-тĕк, вăл хисепе тивĕç мар.**

Тĕлĕнмелле те, анчах амăшĕсем çине алă çĕклекен ачисем те пур-çке. Вĕсем вара хăйсем çине çĕр çинчи чи пысăк çылăха илеççĕ. Тавралла çаврăнса пăхăр – çавăн пек тĕслĕхсем пĕрре мар. Ниçта та ĕçлеменскерсем, ĕçкĕпе алхасаканскерсем амăшĕсене ним шеллемесĕр хĕн кăтартса пурăнаççĕ. Вĕсем вара ачисене саккунпа айăпласран хăраса никама пĕлтермесĕр чăтаççĕ.

Тĕмпекре пурăнакан П.Матвеев та хăйне çуратнă çынна чылай вăхăт хĕн кăтартнăшăн суд тенкелĕ çине лекнĕ. 51-ри вăй питти арçын ниçта ĕçлеме шутламан, эрех ĕçме пĕрмаях амăшĕнчен укçа ыйтнă, памасан хĕнеме те именмен.

Пĕлтĕр январьте, акă, пĕр кун П.Матвеев килте ӳсĕр пулнă. Çакскере ĕçсе çитмен курăнать, амăшне укçа кăларса пама хушнă. Анчах вăл килĕшмесен тӳрех питрен чăмăрпа ярса панă, сăмсаран юн юхса аннине курсан кăна урăх тĕкĕнмен.

Тепĕр тĕслĕхре, мартăн 5-мĕшĕнче, укçа паманшăн амăшне ӳсĕр ывăлĕ вырăн çинчен урайне туртса антарнă, килтен хăвалама тытăннă. Мартăн 9-мĕшĕнче вăл ватă çынна килтех хĕнесе пĕтернĕ. Хальхинче те арçын укçашăнах ухмаха тухса кайнă: усал сăмахсемпе кăшкăрнă, амăшне тытса силленĕ. Çак вăхăтра ӳсĕр тем тума та пултарнине ăнланса амăшĕ çуртран тухса тарма хăтланнă. Анчах ĕлкĕреймен, ывăлĕ ăна хăваласа çитсе кăкăртан иккĕ-виççĕ çапнă. Юрать-ха, мăнукĕ ватă çынна кӳршисем патне илсе тухнă, кунтан милицие пĕлтерме пултарнă.

Вăрнар районĕн 2-мĕш суд участокĕн миравай судйи П.Матвеев тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă май, ун айăпне туллин палăртнă, ăна пĕр çул та 6 уйăхлăха условнăй майпа ирĕкрен хăтарнă. Тĕрĕслев вăхăчĕ те çавăн чухлех, ку тапхăрта каллех йĕркене пăссан капла «çăмăл хăтăлаймĕ».

**Н.ФРОЛОВА,**
**шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕн дознани уйрăмĕн аслă дознавателĕ**
**юстици капитанĕ.**

# «Аннепе» сыв пуллашни



**ШĂПА**

Иртнĕ çулхи кĕрĕн юлашки кунĕсенчен пĕринче юратнă аслă аккана, Иустиния Прокопьевна Владимировна, чĕрĕ пурнăçран-тĕнчерен Христос тĕнĕн тĕп тĕллевĕнчи шухăшлав тĕнчине хурлăхлăн ăсатрăмăр. Иртеменкасси чиркĕвĕн пупĕ каланă хурлăхлă-хăватлă кĕллийĕнчи чуна пырса тивекен сăваплă сăмахсене пуçа чиксе ăнлава хыврăмăр: «Эй, Христос, хăвăн чурусенчен пĕрийĕн чунне чирсĕр, асапсăр, хуйхăсăр çĕре кӳрт, ĕмĕрлĕх пурнăçра святой çынсемпе пĕрле пурăнма пар ăна, хăвăн чурун чунне канлĕхе кӳрт».

Турă саккунĕнчен пăрăнмасăр эпир, паллах, Аслă Хăват кĕллийĕнчи майлах, хамăрăн çывăх çыннăмăра леш тĕнче ырлăхĕнче усрасшăн, унăн вилĕмсĕр сăнарĕпе ыр кăмăллăхне манмасăр, унпа мухтанса пурăнма, хамăр ачапчана та, хамăрăн çывăх çынсене те тăванăн чи лайăх та усăллă енĕсене пама тăрăшатпăр. Пирĕн аккамçăм та çавнашкал ырă тĕслĕх сăнарĕнче, Хурăнсур Çармăс халăхĕн пурнăç тĕкĕрĕнче. Масартан таврăнсан виле апачĕ черетленнĕ чухне аккан хĕрĕ Галя калани хăлхарах: «Тавах Турра, эпĕ пирĕн аннене çапла хисеплесе çакăн чухлĕ çын пухăнасса шутламанччĕ те. Тавах сире тăвансем, ял-йышăм».

Санарпуçĕнчи пĕтĕм тавршра паллă Тимĕрç Элексантăрĕн Матвийĕ Хурăнсур Çармăсри Куçма Яккăльч ывăлне Пракахвие хăйсен кĕçĕн хĕрне Натеше качча парса йăнăшман. Ялти хуçалăхне тăн-тăн тытса пыракан хресченсем паллă тимĕрçĕ ачине кил йăвине кĕртсе те телей кăна тупнă. 1921–1923 çулсенчи выçлăх та вĕсене, хăй аллине илеймен. Çамрăк çемье, ашшĕ-амăшĕн икĕ енчи пилĕпе хăпартланса, икĕ йăх тымарĕн вăйĕпе чĕрĕлсе çирĕпленсе, çут çанталăк имĕпе, ырлăхĕпе чăмăрланнă, вăйланнă, 1924 çулта хăйсен пĕрремĕш пепкине кăкăр çумне ыталаса савăннă. Савăклăхĕ çеç нумая тăсăлман. Анăçран сиксе тухнă хаяр вăрçăн хура аллисем чечекленекен вун çиччĕри Уçтене те хăрушшăн ярса илнĕ.

Вăхăтсăр çемье пуçĕсĕр тăрса юлнă пиншер чăваш çемйинчен пĕринче пурнăç тилхепине хĕрарăмăн, Надежда Матвеевнан, ĕçпе кушăрхаса хытнă аллипе çирĕппĕн ярса тытмалла пулнă. Арçын вăйне вăрçă фрончĕ кăшланă май, тылри ĕç хĕрарăмсемпе çамрăк хĕрсен, каччăсен, сусăрсен тата вăрçăран хăтарса ятарлă ĕçе хăварнă арçынсен хулпуççийĕ çине тиеннĕ. Тăшманĕ хаяр йытăллах талпăнса пынă. Ăна чарса лартмашкăн патшалăх пуçлăхĕсемпе Хĕрлĕ Çар ертӳçисем тем те палăртнă. Çав майпа Хусан, Чулхула еннелле талпăнма пултаракан фашист çарĕсен умне питĕ пысăк чаркăч лартнă: 1941 çул вĕçнелле тата 1942 çул пуçламăшĕ тĕлнелле 380 километр тăршшĕ хӳтĕлев туса хатĕрленĕ. 100 пин колхозник Сăр юхан шывĕ тăрăхĕнчи шăннă çĕре шартлама сивĕре алăпа чавнă, лашапа турттарнă: 5 миллион кубла метр! Çавă «ял çарĕнче» Вăрнар районĕнчи Чапаев ячĕллĕ колхозăн çамрăк ударници Иустиния Прокопьева та юлташĕсемпе пĕрле тĕрмешнĕ. Ялтан ăна лаша шанса парса янă пулнă. Хăйсем хăмаран çапса тунă баракра пурăннă, лашисем – витĕр çил вĕрекен хӳтлĕхре. Кам хураллана-ши вĕсене? Сергач тутарĕсем вăрттăн вăрласа тарнă çав пĕр касхине Уçтенĕн лашине те. Колхоз председателĕ аннесене çухалнă лашашăн тӳлеттерсе, çемьене пушшех чухăнлатса хăварнă. Вăрçă çинчен ытлашши пакăлтатнине итленĕ май е ĕçкĕ-çикĕре «вăрçă хастарĕсем» пĕр-пĕрин умĕнче мухтанса паттăрланса ларнине курсанах анне хăйĕн куççуль витĕр тухакан сăмахĕсене вăрттăн тутăр вĕçĕпе хупласа макрас пек калатчĕ: «Ах, çак карма çăварсемшĕн çеç телей пулчĕ ку вăрçă-харçă...» Упăшкисемсĕр тăрса юлнă тăлăх арăмсене, вĕсен ачи-пăчине мĕн май килнĕ таран пулăшма васкатчĕ. Вĕсем хăйсем виличченех: «Ах, инке пирĕншĕн анне вырăнĕнчехчĕ, спаççипă ăна пире выçлăхран, тертрен çăлса хăварнăшăн», – тесе йĕре-йĕре асăнатчĕç.

Уçтен аккана та, пиншер çамрăк хĕрсем пекех вăрçă нушине арçын тӳсĕмĕпе çĕнтерме хăнăхнăскерне, ай мĕн тери йывăр пулнă. Çĕршыва йывăç кирлĕ! Кашни ял Советне çирĕп план çитерсе панă. Вилсен-çурăлсан та ăна пурнăçламаллах. Вăрман касма, клуб турттарма çамрăк хĕрсем ăмăртса тухаççĕ. Хĕллехи сивĕре юр ашса, йĕпенсе, çур-кĕрте, çулла пăчкăпа йывăç касса, лашапа чукун çул хĕрне турттарса мĕн нуша курман-ши вĕсем! Колхоз ĕçĕнче нумай хĕрарăмсемпе пĕрле вăл та тимĕр урапаллă тракторпа çĕр сухаланă.

Çапах та вăрçă çулĕсем ял пикисене хутлатса лартайман. Хăйсен чăваш капăрлăхĕпе, типтерлĕхĕпе, чăтăмлăхĕпе вĕсем халăх умĕнче йăлкăшса кăна тăратчĕç. Каччă сахалли кăна вĕсемшĕн чĕр нуша пулнă. Çапах та кашниех тенĕ пек хăйсен юратăвне тупса çемьеллĕ пулчĕç, ачапча çуратса ӳстерчĕç – пурнăçа малалла кустарса ячĕç. Манăн акка фронтран аманса орден-медальпе таврăннă Петр Владимиров паттăр мотоциклиста качча тухрĕ.

Хаçат-журнал енне сулăннă, литературăна юратакан Ковский хушма хушаматлă корреспондент, сăвăç нумай енлĕ аталаннă çынччĕ. Килĕнче унăн купăс, граммофон, гитарăпа балалайка, типĕ батарейăпа ĕçлекен «Родина» ятлă мăн радиоприемник, «Фотокор» сăн аппарачĕ тата мĕн кăна çуккăччĕ-ши ял ачисене кăсăклантаракан япала. Кӳршĕ ял ачи таранах пурте ун патне кĕпĕрленсе тулатчĕç. Йыснан амăшĕпе кинĕ, Уçтен акка, кулатчĕç: «Пирĕн Петĕр ялта тепĕр çĕнĕ клуб уçнă та...» Вĕсем ачасене нихçан та апат çитермесĕр кăларса яман. Йыснан ялан хамăр ялта çукки тупăнатчĕ. Пĕринче вăл Вăрнар пасарĕнчен тырăпа улăштарса попугай илсе килчĕ. Пирĕншĕн тепĕр савăк хутшăнчĕ.

Акка колхозра яланах ятлă çын шутĕнчеччĕ. Ывăлпа хĕр ӳстерчĕç вĕсем йыснапа. Радикĕ вăтам шкул хыççăнах çар училищине кайса кĕчĕ те, вăтăр çула яхăн службăра пулчĕ, подполковник. Хĕрĕ, Галя, Çĕрпелти ача садĕнче хăçантанпа ĕçлет ĕнтĕ. Унăн – виçĕ ывăл. Иккĕшне авлантарнă, кĕçĕнни шкула чупать.

Тĕлĕнмелле, эп астăвасса тахçанах ялти хăш-пĕр çамрăк ашшĕсемпе амăшĕсем ачисене «папа-мама» теме хăнăхтарма пуçланăччĕ, халĕ çав чир анлăнах сарăлчĕ. Пирĕн аккасен вара ... Галинчен ачисем кукамăшне анне теме вĕренчĕç-хăнăхрĕç те, хăйсен вырăсланнă ачисем те аннех тесе хисеплерĕç.

Анне 1988 çулта çĕре кĕнĕ хыççăн эпир те, Маньăпа Евкен аккасем, аслă аккана Уçтене анне вырăннех сума сума пуçларăмăр.

Çынна нихçан усал туман, çынна ялан йывăрлăхра пулăшнă, вĕсемшĕн кулянă йыснапа иккĕшĕ те. Ĕçлесех, мăнукĕсемпе вылясах, вĕсемпе ял вăрманне çырла, мăйăр, кăмпа, чечек татма çӳресех савăнатчĕ аслă аккамăр.

Гальăпа упăшки Витя хăтлă çурт лартрĕç, килне вăйлатрĕç. Амăшне уйрăм пӳлĕм уйăрса пачĕç. Мăнукĕсем черетпе ун çумĕнче амăшĕн ачашлăхне туйса, çывăрса ӳсрĕç. Хăйсем çук чухне тунсăх ан пустăр тесе ун патне читлĕх лартса панă. Акка капăр попугайпа, çамрăк чухнехине аса илнĕн, питĕ тăрăшса калаçатчĕ. Кайăка вăл ташлаттарса хăй те пĕр-ик çаврăм туса илетчĕ. Таçтан муртан çакланнă йывăр чирне çĕнтереслех хавхаланатчĕ. Хĕрĕ ĕçе кайсан, пĕччен юлнă амăшĕн çут тĕнчери юлашки саманчĕ попугай ташшиллĕ, сăмахĕллĕ пулнă пуль...

Çут тĕнчери халăх миллиарчĕсен йышĕнчен пĕр çын леш тĕнчене ăсанни вăл, паллах, пĕтĕмĕшле илсен, курăмлах та мар пуль, анчах та чăваш халăхĕн пĕрлĕхĕнчен пĕр чĕрĕ катăк уйрăлсан, сисĕмлех.

**Владимир КУЗЬМИН.**
Хурăнсур Çармăс.

**■ Владимир Прокопьевичпа Иустиния Прокопьевна 2008 çулхи Сăпасра.**
**Радик КОВСКИЙ ӳкернĕ.**

